24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 26 КĔСНЕРНИКУН 48(6073) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔН, ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем нимĕçсен 16-мĕш армине çавăрса илнĕ

Пирĕн трофейăсем

Сурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем (фронт командующийĕ генерал-лейтенант Курочкин) 10 кун каялла Старая Русса районĕнче нимĕçсен 16-мĕш армине çавăрса илме тытăннă ĕçе [illegible] кунсенче вĕçленĕ. Нимĕçсен 16-мĕш армийĕ (командующийĕ генерал-полковник фон Буш) [illegible] пирĕн войскăсем атака пуçласа янă. Атакăн пĕрремĕш тапхăрне пурнăçа кĕртсе, нимĕçсен иккĕмĕш армейски корпусĕн 290-мĕш пехотнăй дивизине (командующийĕ генерал Брокдорф), 10-мĕш армейски корпусĕн 30-мĕш пехотнăй дивизине (командующийĕ генерал Ганзен) тата СС дивизине çавăрса илнĕ. Çапăçу пулса иртнĕ вырăнта нимĕçсен 12 пин çынна яхăн вилсе выртса юлнă.

Пирĕн войскăсем тытса илнĕ трофейăсем: орудисем—185, минометсем—135, танксем—29, пулеметсем—345, автоматсемпе винтовкăсем—4.150, автомашинăсем—450, мотоциклсем—320, велосипедсем—560, тракторсем-тягачсем—15, вагонсем—125, паровозсем—8, артиллери снарячĕсем—14.000, минăсем—9.700, патронсем—1.300.000, ручной гранатăсем—6.350, понтонсем—53, телефон кабелĕ—105 километр, радиостанцисем—27, парашютсем—355, лашасем—335.

Çавăн пекех продовольствисен, боеприпассен тата ытти çипуç-тумтирсен складсене тытса илнĕ. Вĕсене халĕ шута илеççĕ.

Çапăçусенче генерал-лейтенант МОРОЗОВ юлташăн, генерал-майор ГРЯЗНОВ юлташăн тата генерал-майор БЕРЗАРИН юлташăн войскисем уйрăмах палăрнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Çĕнĕ культурăсене акма халех хатĕрленмелле

Кăçалхи çуракин уйрăмлăхĕсенчен пĕри вăл—кăçал пирĕн колхозсем иртнĕ çулсенче акса туман çĕнĕ культурăсене акма палăртни пулса тăрать. Çавнашкал культурăсенчен кăçал пирĕн чылай кок-сагыз, 200 гектар эмелсем тума кирлĕ тĕрлĕ культурăсем акса хăвармалла.

Çĕрĕç халăх комиссарĕ çав культурăсене хăш районра тата мĕн чухлĕ акса хăвармалли планне райçĕрĕçпайĕсем патне çитерчĕ. План тăрăх, Тăвай, Комсомольски, Вăрмар, Чкаловски, Шăмăршă, Елчĕк, Первомайски, Канаш, Красноармейски, Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар, Çĕрпÿ районĕсен кок-сагыз акса хăвармалла пулать. Эмелсем тума кирлĕ культурăсене Куславкка, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче туса илме пăхнă.

Çак асăннă культурăсенчен уйрăмах кок-сагыз пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кок-сагыз тымарĕсенче каучук пулать. [illegible]

Пирĕн республикăра нумай колхозсемшĕн кок-сагыз çĕнĕ культура пулса тăрать. Чăнах та, хăшпĕр колхозсенче [illegible] «Красный кубик» [illegible] гектартан 7-шер центнер кок-сагыз тымарĕ туса илнĕ. Çапла пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн колхозниксемшĕн кок-сагыз акса тăвас ĕç çĕнĕ ĕç темелле. Апла пулсан, кок-сагыз акса хăварма пирĕн колхозсен халех тĕплĕн хатĕрленни кирлĕ.

Кок-сагыз кăпка тата лайăх çемçетнĕ çĕре юратать. Ăна ÿсме нÿрĕ тулăх кирлĕ тата ăна акнă чухне агротехникăн пур правилисене те çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле. Çапла тусан пирĕн республикăра та кашни гектартан 20—25 центнер таран кок-сагыз тымарĕ туса илме пулать.

Колхозсенче халь Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем чĕннине массăллăн сÿтсе-явассĕ, колхозниксем хăйсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тишкерсе тухса çитменлĕхсене палăртса хăвараççĕ, çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес, çуракине хăвăртрах хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе хăйсем çине татăклă обязательствăсем илсе вĕсене васкавлăн пурнăçлаççĕ, Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине вĕсем пур енĕпе те хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çуракине çакнашкал чăн-чăнах большевикла хатĕрленекен колхозсенче çĕнĕ культурăсем акса хăварас ĕçе те манса хăвармаççĕ. Тĕслĕхрен эпир Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозпа «Большевик» колхоза илсе кăтартма пултаратпăр. Çак асăннă колхозсенче кок-сагыз акса тума халех уйрăм звеносем уйăрнă. Çав звеносем халь кок-сагыз акса хăвармалли çĕр лаптăкĕсене çемçетме халăх-мĕнсен тислĕкĕсем пухаççĕ, минералла удобренисем кÿрсе илеççĕ [illegible]

[illegible] «Новая жизнь», «Орель», «Костер» колхозсем хăйсене [illegible] «Красный металлист», Молотов [illegible] «Броневик» колхоза [illegible] «Красный пахарь» тата Чкалов ячĕпе [illegible]

[illegible] вăсси пĕтĕмпех фронт интересĕсенчен тухса тăрать. Фронта мĕн кирлине, фронт мĕн ыйтнине пирĕн пурне те вăхăтра тата çителĕклĕ таран туса памалла. Фронт интересĕсемпе тачă çыхăнса тăракан культурăсене ăнăçлăн акса хăварасси, вĕсене тухăçлăн туса илесси чыслăран та чыслă ĕç пулса тăрать. Апла пулсан, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсен çуракине пур енчен те тĕплĕ хатĕрленсе çитес ĕçе темиçе хут вăйлатмалла, уйрăмăнах халь пирĕн çĕнĕ культурăсене акма тимлĕн хатĕрленмелле. Хăш культурăна мĕнле çĕр çине акмаллине, мĕнле удобренисемпе тата мĕнле çемçетмеллине пирĕн лайăх вĕренсе çитмелле. Халех çав çĕнĕ культурăсем акмалли вырăнсене палăртса, çав вырăнсенче юр ытларах тытса хăвармалла, çуна çулĕсем пĕтиччен çав культурăсен вăрлăхĕсене, минералла удобренисене çителĕклĕ кÿрсе килмелле, уйрăм звеносем уйăрса, çав звенори çынсене çĕнĕ культурăсене мĕнле майпа ăнăçлăрах туса илмелли çинчен вĕрентмелле.

Çак çĕнĕ ĕçре, паллах, районсемпе участоксенчи агрономсен малта пулмалла, никам та мар, вĕсен çак ĕçре колхозниксемпе колхозницăсене вăхăтра тата куллен пулăшса, вĕрентсе пымалла. Райçĕрĕç пайĕсен çĕнĕ культурăсене акса хăварма хатĕрленес ĕçе хăйсен пуçарса пымалла, çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитес ĕçе чăн-чăнах большевикла организацилемелле.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсенчи начальствующи состава Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене ЛЕНИН орденĕпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА» медалĕ парса, Совет Союз Геройĕн званине парас:

Подполковника Андрей Никифорович Витрука.

Старши лейтенанта Александр Алексеевич Липилина.

Лейтенанта Георгий Терентьевич Невкипелыя.

Старши лейтенанта Иван Денисович Чулкова.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 24-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисем хирĕç тăнине сирсе пăрахса, малаллах куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 21 самолетне персе антарнă. Пирĕн 13 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 10 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 327 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 140 лавне, горючи тултарнă 8 автоцистернине, 31 орудине, зенитнăй пулеметсен 27 точкине, 23 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 5 складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 17 вагона тата пĕр паровоза çĕмĕрнĕ, чугунçулăн икĕ эшелонне вут тивертнĕ, противникăн пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Иртнĕ эрнере, февралĕн 15-мĕшĕнчен 21-мĕш хушшинче, нимĕçсен çарĕн 157 самолет пĕтнĕ. Вĕсенчен сывлăшри çапăçусенче 95 самолет персе антарнă, пирĕн зенитчиксем 11 самолет персе ÿкернĕ, противникăн аэродромĕсем çинче 51 самолет пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 54 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн пĕр часть февралĕн 23-мĕшĕнче халăх пурăнакан А. пункта, противник вăйлăн çирĕплетнĕскерне, çĕмĕрсе пырса кĕнĕ те 8 блиндаж, танксене хирĕç пемелли 6 оруди тытса илнĕ тата противника хирĕç вăйлăн çапăçса нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противникăн нумай контратакисене сирсе пăрахса, малаллах куçса пыраççĕ. Пирĕн чаçсем халăх пурăнакан 7 пункта тата чугунçулăн 2 станцине йышăнса илнĕ. Противник техникăпа çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем тÿснĕ. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем нимĕçсен 76-мĕш пехотнăй дивизийĕн 203-мĕшпе 230-мĕш полкĕсене тата нимĕçсен 9-мĕш пехотнăй дивизийĕн 57-мĕш полкне çапса аркатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн виллисем питĕ нумай выртса юлнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Гитлер офицерĕ К. ялĕнчи 80 çулти Матвей Матвеевич Кузьмина чĕнсе илнĕ те ăна вăрттăн çулсемпе Горбунов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн боевой хуралĕ вырнаçнă çĕре нимĕçсен пысăк ушкăнне ертсе кайма приказ панă. Çул çине хатĕрленнĕ чухне Кузьмин юлташ, нимĕçсене систермесĕр, хăйĕн 14 çулти внукне Васяна совет войскисем патне çитсе хăрушлăх çинчен пĕлтерме хушнă. Кузьмин юлташ ылханнă тăшмансене çырмасем урлă, вăрмансем витĕр нумай вăхăт хушши ертсе çÿренĕ. Юлашкинчен ывăнса та шăнса халран кайнă нимĕçсем кĕтмен çĕртен пулеметсен вучĕ айне лекнĕ. Малтанах асăрхаттарнă совет пулеметчикĕсем гитлеровецсене тÿрĕ тĕллесе персе вĕлерсе пĕтернĕ. Уйхир нимĕçсен виллисемпе витĕннĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 250 çын ытла çакăнта хăйсен вилĕмĕсене тупнă. Нимĕç офицерĕ хăйĕн отрячĕ таната лекнине сиснĕ те старике персе вĕлернĕ. Совет патриочĕн Матвей Матвеевич Кузьминăн геройла ĕçне пирĕн аслă тăван çĕршыври ĕççыннисем нихăçан та манас çук.

* * *

Украинăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Ш. юлташăн партизанла отрячĕ халăх пурăнакан Н. пунктĕнчи нимĕç гарнизонĕ çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 4 пулемет, 1 миномет, темиçе винтовка тата 2.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 297-мĕш дивизийĕн 524-мĕш полкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Иоганн Радлер çапла каласа панă: «Пирĕн взводра тăм илсе яниисемпе ÿпке шыççисем тата ревматизмпа чирленисем нумай. Шатраллă тиф чирĕ те саралсах пырать. Пирĕн взводра 6—7 çын шатраллă тифпа чирленине палăртнă ĕнтĕ. Сывăхри ялтан 25 салтак вырăссем енне каçни çинчен салтаксем пĕр-пĕрне пĕлтереççĕ. Юлашки вăхăтсенче офицерсем пире хаçатсем вулама чарчĕç. Вĕсем хаçатсем вулани салтаксене татах та тарăхтарассăн хăраççĕ».

* * *

Совет войскисем хĕснипе февралĕн 23-мĕшĕнче Смоленск облаçĕнчи Рожково ялĕнчен тухса кайнă чухне нимĕçсем ĕçе юрăхлă пур çынсене те хăйсемпе пĕрле хăваласа кайнă. Нимĕçсен фашистла бандичĕсем çав ялта 80 старике, кăкăр ĕмекен ачасемпе пĕчĕк ачасене те нумай персе вĕлернĕ.

* * *

Линц хулинче (Германия) Геринг заводĕнче пушар тухса взрыв пулнă. Темиçе цех пĕтĕмпех ишĕлнĕ. Заводра поляксем, чехсем, бельгиецсем тата французсем темиçе пиншер ĕçленĕ пулнă.

* * *

Томск чугунçулĕ çинчи Усяты станцинчи вагонсем юсакан пунктри стахановецсем Кузнецовпа Константинов юлташсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа башмачнăй повесоксене тупмалли штамп шутласа кăларнă, малтан çак ĕçе алăпах тунă пулнă. Кузнецовпа Константинов юлташсем çав штампа ĕçлесе малтанхи кунхи задание 800 процент тултарнă. Çав штамппа ĕçлесех тимĕрçĕ Иванов тата молотобоец Титов юлташсем сменăри нормăна 370 процент тултарнă.

Февралĕн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн войскăсем юлашки 5 кун хушшинче нимĕçсен 18 танкне, 11 пулеметне, 11 минометне, 30 орудине, 3 автомашинине, 10 радиостанцине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 2.700 çын пĕтнĕ.

* * *

Зиновьев юлташ командир пулса тăракан пирĕн часть (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) февраль уйăхĕнчи 20 кун хушшинчи хаяр çапăçусенче нимĕçсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 3.220 çын вилсе пĕтнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсенне 150 автомашина, 130 оруди, 9 танк, 180 мотоцикл тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Крещановский лейтенантăн танк экипажĕ, орудипе пулеметсенчен тĕл персе, пĕр çапăçура нимĕçсен икĕ зенитнăй туппине тата танксене хирĕç пемелли 2 орудине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Сержант-пулеметчик Левантишин нимĕç юланучĕсен взводне çывăха янă та тĕл персе тăшманăн 13 салтакне стройран кăларнă. Тепĕр çапăçура хăюллă сержант гранатăсен çыххине ывăтса тăшманăн танкне тата пехота ларса пыракан икĕ автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Скрепилов юлташ командир пулса ертсе пыракан противотанковăй орудисен взвочĕ тăшман танкĕсен атакине паттăррăн сирсе пăрахнă. Петров красноармеецăн оруди расчечĕ малтанхи икĕ снарядпах тăшманăн малта пыракан танкне пĕтерсе тăкнă. Скрепилов юлташ 3 снарядпа 2-мĕш танкне аркатнă. Юлашки 3-мĕш танкĕ каялла çавăрăнса тарма хăтланнă. Анчах та пирĕн артиллеристсем икĕ хут персех ăна та çĕмĕрнĕ.

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Глауземан Баррэнде çумĕнче вăл Маргарита Гаук патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Вырăссем каллех наступлени тума тытăнчĕç. Кунта мĕн пулса иртнине эсĕ тавçăрса илме пултарайăн-ши? Каçхине каллех эпир пурте ура çинче. Эпир халĕ канăç курмастпăр ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн пурнăç питĕ начар, вырăссем атака пуçласа ячĕç те ăна ăнăçлăн вĕçлерĕç, эпир пысăк çухатусем тÿсрĕмĕр. Пирĕн пĕр батальона çавăрса илнĕ. Мĕн кăна пулса иртмест унта! Противник пирĕн ял çине килсе тапăнасса эпир кунĕн-çĕрĕн кĕтсе тăратпăр».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Рудди Вильтин патне нумаях пулмасть унăн амăшĕ Альтенбургран çапла çырнă: «Иртнĕ тунтикун Лиза Зейферт Отто вилни çинчен пĕлтернине илчĕ. Ĕнер Эльза Вайхерт унăн Фрицĕ вилни çинчен пĕлтернине илчĕ, паян госпожа Леманс унăн упăшки вилни çинчен пĕлтернине илчĕ... Клаузницерăн ывăлĕ октябрĕн 15-мĕшĕнчен вара, Герард Пюшель сентябрĕн 19-мĕшĕнчен, Рудди августăн 28-мĕшĕнчен вара нимĕн те çырман. Мĕнпур тăвансем хăраса ÿкнĕ... Ку питĕ хăрушă».

* * *

Курск облаçĕнчи Тим районĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Гниловские дворы ялĕнчи çынсем фашистсен тискер ĕçĕсемпе çаратăвĕсем çинчен акт çырнă. Нимĕç захватчикĕсем колхозниксен пĕтĕм апат-çимĕçĕсене, выльăх-чĕрлĕхĕсене туртса илнĕ. Чылай çуртсене вут тивертсе çунтарса янă. Гитлеровецсем икĕ ача амăшне А. Д. Лабищевăна, С. Я. Чаусова, М. Е. Пожедиевăна тата ыттисене те вĕлернĕ. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, колхозпа колхозниксене нимĕçсем 500 пин тенкĕлĕх сиен кÿнĕ.

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчен тарнă салтаксен Хĕвелтухăç Германири вăрмансенче пытанса пурăнакан ушкăнĕсем Шлюппе хулинчи продовольстви склачĕсем çине пырса тапăннă.

* * *

Узбекистанри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне боецсемпе командирсем тата политработниксем валли 140 вагон парнесем янă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Фронтри уяв

ХЕВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 24-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн фронтри чаçсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçура çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илчĕç. Нимĕçсем çавтери пысăк çухатусем тÿсеççĕ, анчах çапах та хăйсем малтанах çирĕплетсе хунă пунктсенче тытăнса тăмашкăн пур майсемпе те тăрăшаççĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăнине совет войскисем вăйларан вăйлă наступлени тунипе çĕмĕрсе пыраççĕ, тăшманăн хирĕç тăмалли вырăнсенчен çапа-çапа кăлараççĕ.

Уяв ыран тенĕ чухне фронтăн пĕчĕк участокĕнче совет воинĕсем пин ытла фашиста пĕтерсе тăкнă. Юлашки кунсенче уйрăмах гвардеецсем паттăррăн çапăçнă. Вĕсем тăшмана темиçе хутчен те питĕ вăйлăн пыра-пыра çапнă. Ялсенчен пĕрине гвардеецсен 45 çынран тăракан Н-ски подразделенийĕ хÿтĕленĕ. Нимĕçсен 250 автоматчикĕ пирĕн позицисене хирĕç тăтăшах контратакăсем тунă. Иккĕмĕш талăк вĕçленнĕ çĕре тăшмана питĕ пысăк çухатусем кÿрсе сирсе пăрахнă, противник çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 150 виллине пăрахса хăварнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн гвардеецсем, хăвăрттăн атакăласа, нимĕçсене ялтан çапса кăларнă, 100 фашиста ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Н-ски гвардейски чаçăн артиллерисчĕсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тĕл персе тăшманăн салтакĕсене 400 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен икĕ танкне, миномет-сен батарейине, танксене хирĕç пемелли темиçе орудине тата темиçе йывăр орудине стройран кăларнă.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронтри чаçсене Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи ĕççыннисен делегацийĕсем пынă. Ĕççыннисем фронтовиксем валли ярса панă парнесемпе кашни сехетренех эшелонсем пырса тăраççĕ. Пĕр кун хушшинче фронтовиксене уяв ячĕпе 17 пин парне ытла валеççе панă. Удмурд АССР-чен 11 вагон, Бурят-Монголи республикинчи ĕççыннисенчен — 23 вагон илнĕ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсен командующийĕ Совет Союзĕн Геройĕ армм генералĕ Г. К. Жуков, Хĕвеланăç фрончĕн çар Совечĕн членĕ И. С. Хохлов тата Хĕвеланăç фрончĕн Политуправленин начальникĕ бригаднăй комиссар В. Е. Макаров войскăсене приказ панă. Çав приказра çапла каланă:

«Хĕвеланăç фронтĕнчи воинсем! Эсир хăвăрăн юнăрпа тăван Мускава хÿтĕлерĕр. Эсир гитлерла йытквĕтĕвĕсене аркатас ĕçе пуçласа ятăр, фашистла тискер кайăка питĕ вăйлăн пырса çапрăр. Анчах тăшмана халĕ пĕтерсе тăкман-ха. Вăл питĕ хаяррăн хирĕç тăрать, çĕнĕ наступлени пуçласа ямашкăн хăйĕн вăйне пухать.

Пĕр минутăна та, пĕр сехете те, пĕр куна та усăсăр сая ан ярăр, пуçарулăха хăвăр алăрта çирĕп тытса тăрăр. Тăшманăн оборона линийĕсене мĕнпур таранăшпех татса кĕрĕр, унăн кадровăй дивизийĕсен юлашкийĕсемпе çĕнĕ резервĕсене хавшатăр, аркатса ярăр».

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ панă приказа Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсем, командирсемпе политработниксем çавтери пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Юратнă çулпуçăн тата полководецăн приказĕ çине вĕсем тăшмана вуншар хут ÿстернĕ хаярлăхпа аркатма тупа туса, аслă та тĕрĕс ĕçшĕн, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен совет çĕршывне тасататассишĕн хăйсен вăйне те, пурнăçне те шеллемесĕр çапăçма тупа туса ответлерĕç.

И. ГРИБОВ.

Пирĕн боецсем халăх пурăнакан пункта йышăнса илни

ХЕВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Н. ялĕнчен противник хирĕç тăмалли вăйлăн çирĕплетнĕ вырăн туса хунă, ял патне пымалли пур çулсем çине те минăсем лартса тухнă, ДЗОТ-семпе окопсем тунă. Пирĕн пĕр подразделени умне тăшманăн çирĕплетнĕ вырăнне çĕмĕрсе кĕрсе нимĕçсене çав ялтан хăваласа кăларас задача лартнă.

Тăшман урса кайсах хирĕç тăнă. Подвалсемпе чердаксенчен нимĕç пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсем пирĕн наступлени тăвакан чаçсем çине вут-çулăм сапса тăнă, пирĕн чаçсене хирĕç фашистсем миномет батарейисем кăларса тăратнă. Чи малтанах тăшманăн огневой точкисене пусарса лартмалла пулнă. Пирĕн артиллеристсен чаçĕ çак задачăна ăнăçлăн татса панă.

Савин красноармеец, тăшманăн минометчĕсем питĕ вăйлăн персе тăнă вăхăтрах, нимĕçсен позицийĕсем патне пынă та, тăшман мĕн хăтланнине сăнаса, тĕпчесе пĕлсе, тивĕçлĕ сведенисене хăйĕн батарейине пĕлтернĕ. Савин юлташăн хăюллă ĕçне пула, пирĕн артиллеристсем нимĕç салтакĕсене, контратака тума хатĕрленнĕскерсене, сапаласа янă, противникăн пулемет йăвипе минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă.

Çак çапăçура Бражнин юлташ командир пулса ертсе пыракан оруди расчечĕ уйрăмах чапа тухнă. Вăл, хăйĕн орудине уçă позицие илсе тухса, тăшманран 150 метр çеç аякра вырнаçтарса лартнă та нимĕçсен çирĕплетнĕ пункчĕсене тÿррĕн тĕллесе пеме тытăннă. Пĕрремĕш хут персех тăшманăн ДЗОТ-не, пулеметсен икĕ йăвине пусарса лартнă. Пирĕн пехотинецсем çакăнпа вăхăтра усă курнă. Вĕсем тăшмана штыксемпе, гранатăсемпе çĕмĕрсе яла пырса кĕнĕ. Ял урамĕсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Чердаксенчен нимĕçсен автоматчикĕсем пенĕ, çуртсен тÿречисемпе подвалĕсенчен пулеметсем вут-çулăм сапса тăнă. Пирĕн боецсем пĕр çурт патĕнчен тепĕр çурт патне чупса пырса, фашистсен пулеметчикĕсем вырнаçса ларнă çуртсен тÿречисене гранатăсем пăрахнă. Тăшманăн пулеметчĕсем пĕрин хыççăн тепри путлана-путлана ларнă. Пономарев красноармеец хăй пĕччен 10 фашиста пĕтерсе тăкнă.

Ялăн тепĕр енне Демченко юлташ ертсе пыракан боецсен группи çĕмĕрсе кĕнĕ. Унăн çулне тăшманăн икĕ роти пÿлсе лартнă. Пирĕн воинсем лайăхрах позицисене йышăнса выртнă. Фашистсем вĕсене таптаса лутăркама пикеннĕ. Совет боецĕсем тăшмана çывăха янă та, автоматсенчен питĕ вăйлăн персе, каялла сирсе пăрахнă. Çак вăхăтра пирĕн боецсен 3-мĕш группи, кĕçĕн политрук Наумов ертсе пынипе, тăшманăн çирĕплетнĕ вырăнĕсенчен тавра çавăрăнса иртсе, нимĕçсене тылран пырса çапнă. Çакă ĕнтĕ çапăçăва татса панă. Фашистсем чăтса тăрайман: çапăçу хирĕнче вĕсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене пăрахса хăварса, Н. ялĕнчен хĕвеланăç еннелле нимĕн йĕркесĕр тухса тарнă. Пирĕн боецсем трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Боецсем хăйсем тупа тунине пурнăçа кĕртнĕ

ХЕВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 21-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Гленков лейтенант, Хаджи Муратов политрукпа тата 18 боецпа пĕрле, Р. ялне хÿтĕлесе тăнă. Пирĕн тĕп вăйсем çав вăхăтра тăшманăн оборонине питех те шалалла шăтарса кĕрсе кайнă пулнă, Р. ялĕ вара флангра, тăшман пырса çапма майлă çĕрте, тăрса юлнă. Çав яла сухатни пирĕн боецсемшĕн пысăк хăрушлăх кÿнĕ пулĕччĕ, мĕншĕн тесен тăшман çавăнтан пырса пирĕн малалла кайнă подразделенисене çавăрса илме пултарнă пулĕччĕ.

Тул çутăлас умĕн нимĕçсем атака пуçласа янă. Минометсемпе артиллерирен персе тăрса пулăшнипе нимĕçсен 200 автоматчикĕ ял çине тĕрлĕ енчен пырса çапнă. Питех те йывăр лару-тăру пулса тăнă. Анчах та çак йывăр самантра никам та—Гленков лейтенант та, Хаджи Муратов политрук та, пĕр боец та шикленсе ÿкмен. Вĕсем пĕр-пĕрин умĕнче çирĕп тупа тунă: çакăнта вилсессĕн те нимĕçсене хамăрăн чаçăн тылне кĕрсе кайма памалла мар! Хăйсем тупа туса сăмах панине вĕсем вĕçне çитиех пурнăçа кĕртнĕ.

Нимĕçсен ушкăнĕсем ял патнелле сывхарса çитсен, Гленковăн боецĕсем винтовкăсемпе пулеметсенчен нимĕçсем çине тăвăллăн пеме тытăннă. Совет боецĕсен пульлисем тĕл пырса лекнипе фашистсем пĕрин хыççăн тепри тăрăна-тăрăна кайнă. Анчах та, пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăрах, нимĕçсем урса кайсах малалла талпăннă. Пирĕн позицисем патне çитесси темиçе метр кăна юлсан, Гленков юлташăн подразделенийĕнчи пĕртен пĕр пулемет чарăнса ларнă. Патронсем пĕтнĕ.

— Юлташсем, пирĕн каялла чакмалла мар! Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн—малалла!—тесе кăшкăрса, Гленков лейтенант ура çине сиксе тăнă та алăнчи винтовкăпа пуринчен малтан тăшман çине ыткăннă, ун хыççăн вара — ытти мĕнпур боецсем те çапăçăва кĕрсе кайнă.

Вăйсем тан мар çак çапăçура пирĕн хăюллă паттăрсем вуншар фашиста çапа-çапа ÿкернĕ. Хăйсем те вĕсем чăн-чăн геройсен мухтавлă та чыслă вилĕмĕпе пуçĕсене хунă. Хăйсен пурнăçĕсене парса, вĕсем нимĕçсене ял патне пымалли вырăнсенче тытса чарнă. Çав вăхăтра пирĕн подкреплени пырса çитнĕ те тăшманăн группировкине çапса аркатас ĕçе вĕçне çитернĕ. Пирĕн малалла кайнă чаçсен тылĕ патĕнчен хăрушлăх сирĕлнĕ.

А. ВИКТОРОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Тихасем ĕçе хăнăхрĕç

СОВЕТСКОЕ. Пирĕн колхозсенче çамрăк тихасем нумай ÿсеççĕ. Чылай колхозсенче çав тихасене хĕле кĕрсене ĕçе хăнăхтарма тытăнчĕç. Сăмахран, Мăн Этменри, Лутра-Пакăшри, Чемееври, Тури-Ачакри колхозсенче çапла турĕç.

Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе «Красный пахарь» колхозра лайăх ĕçлеççĕ. Колхозăн пурĕ 26 тиха. Çав тихасене тăрăшса пăхнă пирки, тихасем пурте тĕреклĕ çитĕнчĕç. 26 тихаран 20-шĕ 1939-мĕшпе 1940 çулсенче хăмланисем. Вĕсене колхозра хĕллех ĕçе хăнăхтарма тытăнчĕç, халь вĕсем пурте ĕçлеме хăнăхса çитрĕç ĕнтĕ.

С. ИЛЬИН.

Кольцовка колхозницĕсем пек хатĕрленеççĕ

ЕТĔРНЕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă май, колхозсенче пур çĕрте те çуракине хатĕрленес ĕç вăйлланчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем те çуракине Кольцовка колхозникĕсем пек хатĕрленсе çитессишĕн хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ.

Çĕнĕ Етĕрнери «Комсомол» колхозра çак иртнĕ кунсенче кăна уя 500 лав тислĕк кăларчĕç, 23 гектар çинче юр тытса хăварчĕç, 2 тонна фосфорит çăптăрса кÿрсе килчĕç.

Куйти колхозниксем «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз членĕсемпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхозра çуракине Скворцов бригади пуринчен лайăхрах хатĕрленет. Ун бригади хăйне кирлĕ вăрлăхсене никамран малтан тасатса çитерчĕ, ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕ.

Стрелецкинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз çуракине, пĕтĕмĕшпе илсен, хатĕрленсе çитнĕ. Халь колхозра вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслеççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Ĕç планĕ туса çирĕплетрĕç

ЕЛЧĔК. «Красное знамя» колхозра çак кунсенче колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура колхоз çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен сÿтсе-ятрĕç.

Колхоз çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе пырать. Акма кирлĕ вăрлăхсене колхоз çителĕклĕ хатĕрлесе хунă, тасатнă. Вĕсен пахалăхне çак кунсенче тата тепĕр хут тĕрĕслесе тухнă. Вăрлăх çитмен колхозсене вăрлăхсем парса пулăшма вăрлăх фончĕ тунă.

Пухура çуракинчи ĕç планне пăхса тухса, ăна пахаласа çирĕплетрĕç. Халь ĕнтĕ кашни бригада хăйĕн мĕнле культура тата хăш вырăнта мĕн чухлĕ акмаллине ăван пĕлсе тăрать. Бригадăсем хăйсен участокĕсене çемçетме тытăнчĕç.

Н. СУХАРЕВСКИЙ.

Ялхуçалăх машинисем хатĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Исаково» колхозра çуракине пур енчен те вирлĕн хатĕрленеççĕ. Уйрăмăнах колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ĕç аван пырать. Колхозăн пурĕ 18 плуг. Вĕсене пурне те юсаса çитернĕ. 39 сÿререн 34 сÿре юсанă, халь ыттисене юсаççĕ. Транспорт инвентарĕсене юсама колхозра ятарласах мастерской уçрĕç. Унта Н. Козловпа А. Алексеев колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак иртнĕ кунсенче мастерскойра 13 çуна çĕнĕрен турĕç тата 9 çуна кивисене юсарĕç.

Я. НИКИТИН.

Машинăсен пайĕсене пухаççĕ

КАЛИНИНО. Чăрăш Шĕнерти «Красноармеец» колхозра комсомолецсемпе комсомолта тăман çамрăксем çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Халь вĕсем ялхуçалăх машинисен пайĕсене пухма тытăнчĕç. Паянхи куна çитсе вĕсем тĕрлĕ шестернясем 5 штука, гайкăсем 15 штука, плугсен тĕрлĕ пайĕсене 25 штука пухрĕç. Кусемсĕр пуçне тата 50 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă.

Б. ШОРНИКОВ.
М. МИХАЙЛОВ.

Комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçре

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Комсомолăн Анат Тăрмăш ялсоветне кĕрекен колхозсем çумĕнчи пуçламĕш организацийĕсем 1942 çулти çуракине большевикла хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ

Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем 28 центнер кĕл, 3 тонна кайăк кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 500 лав тислĕк тăкнă. Комсомолецсен вăйĕпе 75 центнер тырă сортланă. Халĕ ялхуçалăх машинисене юсаççĕ. И. МИТРОФАНОВ.

Вĕренекенсем çĕрулми вăрлăхĕсем хатĕрлеççĕ

Шăхасан вăтам шкулĕнчи ачасем, районри шкул ачисемпе колхоз çамрăкĕсене çĕрулми вăрлăхĕ хатĕрлесси пирки чĕнсе каланă хыççăн, академик Лысенко юлташ меточĕ тăрăх хĕрсех çĕрулми вăрлăхĕсем хатĕрлеме тытăнчĕç. В. Авакумова, М. Орлова, Ф. Козина, Л. Константинова вĕренекенсем виçшер витре çĕрулми вăрлăхĕ касса хатĕрленĕ.

Кунсăр пуçне ачасем колхозсенче кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. О. Сергеева, С. Ильина, М. Герасимова, В. Иванов пĕрер центнер кĕл пухса хатĕрленĕ.

Кашни шкул ачи хĕлле колхоз производствинче 25—30 ĕçкунĕнчен кая мар тума ĕмĕтленеççĕ.

А. ОРЛОВ,
В. СОРОКИН.

Вăрман хатĕрлевĕнче

КАНАШ. Районри чылай колхозсем вăрман хатĕрлес ĕçе [illegible]

[illegible] председателĕ те, пĕр ялсовет председателĕ те [illegible]

Т. ТУРХАН.

* * *

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси ялсовечĕ [illegible]

П. ЯКОВЛЕВ.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ

КАЛИНИНО. Февралĕн 22-мĕшĕнче районри йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. [illegible]

В. КАРПОВ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа килнĕ саламсем

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ тата Оборона Халăх Комиссарĕ И. В. Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пирĕнпе туслă çĕршывсенчи государственнăй тата общественлă деятельсенчен саламлă телеграммăсем илнĕ. Аялараххра эпир Сталин юлташ илнĕ телеграммăсенчен çаксене пичетлетпĕр:

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президентĕнчен г. ФРАНКЛИН РУЗВЕЛЬТРАН

Сирĕн çар ăнăçусем туни пире питĕ хавхалантарать. Хĕрлĕ Çара организациленĕ 24 çул тултарнă кун Сире чĕререн сывлăх сунса саламлатăп.

Великобританин премьер-министрĕнчен тата Оборона министрĕнчен УИНСТОН ЧЕРЧИЛЛЬРЕН

Хĕрлĕ Çара тунăранпа 24 çул тултарнине вăрçă ĕçĕсем пуçланнăранпа 8 уйăх иртнĕ хыççăн уявлаççĕ. Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе рядовой боецĕсем унăн мухтавлă ĕçĕсене историе ĕмĕрлĕхех çырса хучĕç. Çак паллă çĕнтерÿсемшĕн эпĕ Сире, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Оборона Комитечĕн Председательне, Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен мĕнпур составне, Британи империйĕнчи мĕнпур халăхсем хавхаланнине, тав тунине калаcа паратăп. Британи халăхĕсем Хĕрлĕ Çар тăвакан паттăрла ĕçсене, эпир пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç туса пыракан кĕрешĕве çĕнтерÿллĕн вĕçлессине шанса тăрса, тимлĕн сăнаса тăраççĕ.

Китай республикин исполнительнăй палатин председателĕнчен, Китайăн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующинчен генералиссимус ЧАН КАЙ-ШИРЕН

Сирĕн çĕршывăн аслă Хĕрлĕ Çарĕн хаваслă уявĕ ячĕпе Китайри мĕнпур халăх тата çар ячĕпе хĕрÿллĕн сывлăх сунса саламлатăп.

Иртнĕ çулти июнь уйăхĕнчен пуçласа, Сирĕн çĕршывăн Хĕрлĕ Çарĕ, эсир ертсе пынипе тата командир пулса тăнипе, фашистла çĕршывсен варварла тата этемле мар агрессине хирĕç отпор парать. Малтанхи тапхăрти татти-сыпписĕр пынă çапăçусенчен тытăнса пур çĕрте те контрнаступлени пуçласа янă юлашки тапхăрсене çитиех Сирĕн çар, питĕ пысăк хăюлăх кăтартса парса, тăшмана питĕ вăйлăн пыра-пыра çапрĕ. Сирĕн Хĕрлĕ Çарăн çапăçури çав питĕ чаплă ăнăçăвĕсем агрессие хирĕç кĕрешекен лагерьти союзлă пур çĕршывсене те Россия çĕнтерÿ тăвассине татах та ытларах ĕнентерчĕç. Хальхи вăхăтра, икĕ континентри — Европăпа Азири — икĕ çаратуçă-тискер вăя тăпăлтарса кăларас, пĕтĕм тĕнчипех мирлĕ самана тăвас тĕлĕшпе пĕр задачăна пурнăçа кĕртсе пыракан пирĕн икĕ çĕршывăн пысăк йывăрлăхсене çĕнтерме тивет. Пирĕн икĕ çĕршывăн воинĕсем шухăшкăмăл тĕлĕшпе пĕрлĕхлĕ пулнă май кĕрешÿре те пĕрлĕхлĕ пулассине, çапла вара пĕрлешсе пирĕн тÿрĕлĕхлĕ, пысăк миссие пурнăçа кĕртессине, историллĕ аслă та мухтавлă акта пĕрле тăвассине хытă шанса тăратăп.

Францин национальнăй Комитечĕн председателĕнчен генерал Де-ГОЛЛЬРЕН

Хĕрлĕ Çар çуралнăранпа 24 çул тултарнă ятпа вырăссен мухтавлă салтакĕсене вĕсен француз юлташĕсенчен салам каланăшăн эпĕ Сире питĕ пысăк тав тунă пулăттăм. Нацистсен йыткĕтĕвĕсен урнă пек атакисене мухтавлăн хирĕç тăнă хыççăн совет çарĕ, мухтавлă наступлени пуçласа ярса, захватчиксене сывлăш çавăрма памасăр совет территорийĕнчен хăваласа кăларать. Эсир ертсе пынипе, паллă руководительсем командир пулса тăнипе кĕрешекен Хĕрлĕ Çар чуралăхри халăхсене ирĕке кăлармалли тĕп инструментсенчен пĕри пулса тăрать.

Югославин министрсен совечĕн председателĕнчен, Югославин çарпа флот тата сывлăш-çар вăйĕсен министрĕн заместителĕнчен г-н ИОНАНОВИЧРАН

Хĕрлĕ Çар уявĕн ячĕпе эпĕ Югослави çарĕн, флочĕн тата сывлăш-çар вăйĕсен ячĕпе сывлăх сунатăп. Эсир тăшмана хирĕç геройла тăнишĕн, вырăссен никам çĕнтерейми çарĕ тăшмана поражениcем тÿстернишĕн эпир мĕнпур чĕререн савăнатпăр.

Грецин министрсен совечĕн председателĕнчен г-н ТУБЕРОСРАН

Совет çарĕн мухтавлă уявĕ ячĕпе Сире чĕререн сывлăх сунса саламлатăп, ăна çĕнĕ çĕнтерÿсемпе чаплă тухма хĕрÿллĕн ырă сунатăп.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕн Великобритание снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен личнăй представителĕнчен г-н ГАРРИМАНРАН

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Хĕрлĕ Çара сывлăх сунса саламлатăп, Сире, унăн çулпуçне, ырă сывлăх сунатăп. Пирĕн Америка танкĕсемпе самолечĕсем Сирĕн çара çĕнтерÿ тума чăннипех пулăшчăр.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Лондонра Совет посольствинче пулнă йышăну

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Лондонра совет посольствинче йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура 600 хăна ытла пулнă, вĕсен шутĕнче çар кабинечĕн членĕсем: ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, пичет ĕçне сыхлакан лорд Криппс, ĕçлĕхпе национальнăй повинноçăн министрĕ Бевин, совет председателĕ—лорд Андерсон, авиаци министрĕ Синклер, колонисен министрĕ Крэнборн, суту-илÿ министрĕ Дальтон, авиаци промышленноçĕн министрĕ Ллеверун, информаци министрĕ Брэкен, финанс министрĕ Кингсли Вуд, продовольстви снабженийĕн министрĕ лорд Вультон, шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăхăн министрĕ Герберт Моррисон, вăрçă вăхăтĕнчи транспортăн министрĕ Лэзерс, сывлăха сыхлав ĕçĕсен министрĕ Эрнест Браун т. ыттисем те.

Кусемсĕр пуçне йышăнура çаксем пулнă: тинĕс-çар генеральнăй штабĕн начальникĕ Паунд, Импери генеральнăй штабĕн начальникĕ генерал Брук, сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ авиаци маршалĕ Чарльз Портал тата Англин хĕçпăшаллă вăйĕсен ытти высши чинĕсем пулнă.

Йышăнура çавăн пекех тата çаксем пулнă: Бельгин, Югославин тата Грецин премьер-министрĕсем, генерал де Голль, Рузвельтăн личнăй представителĕ Гарриман тата союзниксен тинĕссарпа сывлăш-çар штабĕсен членĕсем. Хăнасем хушшинче çавăн пекех Ллойд Джордж, лорд Бизербрук, лорд Серсен, тред-юнионсен контресĕн генеральнăй секретарĕ Ситрин тата обществăллă политикăллă ытти паллă деятельсем те пулнă.

Наукăпа литературăн тата искусствăн паллă деятелĕсем хушшинчен йышăнура писатель Герберт Уэллс, художник Давид Лоу, т. ыт. те пулнă. Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Лондонри представителĕсем Хĕрлĕ Çар уявĕн тата унăн ăнăçăвĕсен ячĕпе саламсем нумай илнĕ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Лондонра пысăк митинг пулса иртнĕ

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Лондонри пысăк кинотеатрта Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа митинг пулса иртнĕ. Митингра 2.500 çын пулнă, анчах та митинга хутшăнас текенисенчен нумайĕшĕсем зала лекеймен. Президиумра ССР Союзĕн Англири çар миссийĕн членĕсем, Чехословакин, Польшăн, Югославин, Норвегин, ирĕклĕ Францин, Китайăн çар представителĕсем пулнă. Митинга пухăннă çынсем советăн çар миссийĕн членĕсене тăвăллăн алă çупса саламланă. Халăха советăн çар миссийĕпе митинг председателĕ «Ивнинг Стандарт» хаçатăн редакторĕ Френк Оуэн паллаштарнă.

Англи правительствин составĕ

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: улшăнусем тунă хыççăн Англи правительстви çар кабинечĕн составне кĕмен çак министрсенчен тăрать: лорд-канцлер Саймон, финанс министрĕ—Кингсли Вуд, шалти ĕçсен тата шалти хăрушсăрлăхăн министрĕ — Герберт Моррисон, Индипе Бирма ĕçĕсен министрĕ—Эмери, колони ĕçĕсен министрĕ, вăлах лордсен палатин лидерĕ—Крэборн, тинĕс ĕç министрĕ — Алексaндер, çар министрĕ — Григг, авиаци министрĕ — Синклер, Шотланди ĕçĕсен министрĕ — Джонсон, çар снабжени министрĕ—Данкен, суту-илÿ министрĕ — Дальтон, çутĕç министрĕ—Батлер, информаци министрĕ—Бракен, сывлăха сыхлав ĕçĕсен министрĕ — Браун, строительнăй ĕçсен министрĕ — Портал, çĕрĕçпе пулă тытас ĕç министрĕ — Хадсон, авиаци промышленноçĕн министрĕ — Ллеверун, вăрçă вăхăтĕнчи транспорт министрĕ—Лезерс, продовольстви снабженин министрĕ — Вультон, экономикăллă вăрçă министрĕ — Вольмер, почтăпа телеграф министрĕ — Моррисон.

Франципе Америка хушшинчи çыхăнусем çинчен

НЬЮ-ИОРК, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви Легипе Франци руководителĕсемпе калаçма хушнă. Калаçусем Франци правительстви тĕнĕл держависене Çурçĕр Африкăра пулăшу парса тăни çинчен сарăлнă хыпарсем пирки пымалла.

Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Америка посолĕ Леги Петэнпа курнăçса калаçнă.

Риомри процесс çинчен Пьер Кот каласа пани

ВАШИНГТОН, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Францин авиаци министрĕ пулнă Пьер Кот ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каласа панă: Риомри процесс халăх фронтне айăплама фашистсем организациленĕ процесс пулса тăрать, Франция вăрçăра парăннăшăн айăплă генералсене суд тумалли процесс пулса тăмасть. Риомри процесса Рейхстага вут тивертнĕ хыççăн тунă процесăн тĕллевĕсемех тата çав процесăн меслечĕсемпех туса ирттереççĕ. Фашистла ирсĕрсем хăйсен айăпне противник çине йăвантарма тата çапла майпа айăпа хăйсем çинчен сирсе яма ĕмĕтленеççĕ. Риомри процесс гитлеровецсем Рейхстага вут тĕртнĕ хыççăн организациленĕ процесран та ирсĕртерех,—тенĕ малалла Пьер Кот,—мĕншĕн тесен вăл Францири çар сыннисем Дрейфус процесĕ вăхăтĕнче усă курнă методсене çĕнĕрен чĕртсе кăларать, судра вăрттăн меслетсемпе усă курать. Çакна ăсра тытни кирлĕ,—тенĕ малалла Пьер Кот,—Дрейфуса суд тунă чухне Дарлан, Вейган тата Петэн—çамрăк офицерсем пулнă. Вейган ун чухне Дрейфусăн чи хаяр противникĕсенчен пĕри пулнă. Дрейфуса айăплама тăрăшса вăрттăн майсемпе тата суя документсемпе усă курнă, Дрейфусăн чысне тепĕр хут таврас тесе нумай çулсем хушши ĕçлемелле пулнă.

Риомри процеса уçнă чухне Гамелен туха калани çакна кăтартса парать: Франци генералĕсем Франция парăннипе çыхăнса тăракан мĕнле те пулин вăрçă ыйтăвĕсене сÿтсе-явассинчен пăрăнма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та Гамелен хăй процеса уçнă чух каламалли декларацин характерĕ çинчен Петэнпа, Вейганпа, Дарланпа тата Франци çарĕн штабĕпе малтанах калаçса татăлнă теме те пулать. Пьер Кот каланă тăрăх, Виши правителĕсем генералсене айăплама пулан процесса халăх фронтне айăпламалли процесс туса хума тăрăшаççĕ. Риомри процесра суд тумалли айăплă çынсем виçĕ çын: Блюм, Даладье тата Пьер Кот пулса тăраççĕ, халăх фрончĕн тапхăрĕнче активлă ĕçленĕшĕн вĕсене фашистсем курайманççĕ. Пьер Кот шутланă тăрăх, Риомри процесс Блюма, Даладьене тата Пьера виличченех тĕрмере усрамалла туса приговор йышăннипе вĕçленмелле. Пьер Кота вĕлермелле туса приговор йышăнма та пултараççĕ. Пьер Кот çапла каланă: айăпланакан ытти çынсем тĕлĕшпе питех те çăмăл приговорсем çеç йышăнма пултараççĕ. Малалла Пьер Кот çапла каланă: Франция вăрçăра поражени тÿснĕшĕн Францири офицерсен пур сийĕсем те ответлă пулса тăраççĕ, вĕсем кирек мĕнле революцирен те хăраса, фашизма мала хунă. Перемири çине алă пусиччен кăшт маларах кăна Вейган вăрçа чарса лартма кирлĕ тесе каланă, мĕншĕн тесен Парижра коммунистла революци хăрушлăхĕ пулнă. Пьер Кот кăтартса панă тăрăх, Вейганăн çак заявленийĕ çинчен нумайĕшĕсем, вăл шутрах Мандель те, каланă.

Риомра хăйне айăплама палăртса хунă 5 статья пирки Пьер Кот çакна кăтартса панă: хăшпĕр предприятисене национализацилененĕшĕн ăна айăплаççĕ пулин те, халăх фрончĕн çав мероприятийĕшĕн парламент членĕсен 80 проценчĕ сасăланине кăтартса памаççĕ. Авиацие аталантарма çителĕклĕ укçа-тенкĕ илеймен, тесе айăплани пирки Пьер Кот çапла каланă: 1919 çулти декабрĕн 30-мĕшĕнче Пьер Кот çарăн верховнăй комитетне сывлăш-çар вăйĕсене аталантарма каякан укçа-тенкĕсен хисепне икĕ хут ÿстерме сĕннĕ. Анчах верховнăй комитет, çав шутрах унăн членĕсем Петэнпа Дарлан, 1937 çулти февралĕн 15-мĕшĕнче: Франци авиацине ÿстерсе пыни кирлех мар, тесе пĕр саслăн йышăннă. Пьер Кот çапла каланă: Испани çине тапăннă вăхăтра Испани республиканецĕсем валли хĕçпăшалсемпе самолетсем янăшăн айăпланине эпĕ савăнса тата мăнкăмăллăн йышăнатăп, тенĕ. Пьер Кот çав хĕçпăшалсене татах та нумайрах ярайманнишĕн ÿпкелешни çинчен каласа панă. Хăйне айăплакан 4-мĕш статья çинчен, вăл верховнăй командованине йывăрлăхсем умне кăларса тăратнă тесе айăплани çинчен каласа, Пьер Кот çапла пĕлтернĕ: çакăн пек айăпланин сăлтавĕ Франци авиацинче ĕçленĕ хăшпĕр фашистла генералсемпе Пьер Кот хушшинчи хирĕçÿсем пулса тăраççĕ. Тĕслĕхрен вăл Дюсеньене кагулярсен ретĕнче тăнăшăн арестленине илсе кăтартнă. Анчах та Дюсенье Петэнăн çывăх тусĕ пулнă, çавăнпа вăл ăна ирĕке кăларма хушнă. Пьер Кот çав хушăва пурнăçа кĕртме килĕшмен. Хăйне айăплакан 5-мĕш статья пирки, Пьер Кот парламентра Францин хăрушсăрлăхĕ çинчен ытла та мухтанса каланă тесе айăплани пирки, Пьер Кот çакна кăтартса панă: вăл нумаях та пулмасть хăй ун чухне тухса каланă сăмахсене тепĕр хут вуланă, çав сăмахсенче вăл пĕрмаях Францие Англи тата Франципе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшÿсем çине кăтартса панă. Франция Совет Союзĕпе, Чехословакипе тата Англипе лайăх çыхăнса тăнă чухне Германия ун çине тапăнма пултараймасть, тесе шутланă вăл. Эпĕ çапла шутлатăп, тенĕ малалла Пьер Кот, Франция Российăран уйăрăлса кайнин сăлтавĕсене Боннэн ăссăр политикинче тата Францири генеральнăй штаб политикинче шырамалла. Боннэ те, генеральнăй штаб та Риббентроппа çыхăнса кайнă. 1936 çулта эпĕ Российăпа питĕ лайăх хутшăнса тăратăмччĕ тата унта тĕрлĕ миссисем те ятăм. Вырăссенчен пример илсе, эпĕ Франци çарĕнче парашютнăй войскăсене туса йĕркелерĕм. 1938 çулта эпĕ кабинет составĕнче пулман, вара çар штабĕ çав парашютнăй войскăсене салатса ячĕ, вĕсене эпĕ вырăссене юратнă пирки çеç тунă тесе шутларĕ. Парашютнăй войскăсем хальхи вăрçăра усă памаççĕ, тесе кăтартса парчĕ штаб. Российăран килекен çĕнĕ хыпарсене кирек хăшне те Франци генеральнăй штабĕ хирĕçлетчĕ, вăл çĕршывран тухакан йĕркесене пурне те йăнăш тесе шутлатчĕ, Российăран пулăшу иличчен поражени тÿсни авантарах, тесе шутлатчĕ. Çакна пула Мускавран Франци çар аташшине Мендрен полковника каялла чĕнсе илсе пĕтчĕк ĕçе лартрĕç. Полковник Мендрен советсен çар организацине хакла хунă тата ăна ырласа калаçнă.

Венгри салтакĕсем Совет Союзне хирĕç вăрçасшăн мар

СТАМБУЛ, февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). Будапештран халь çеç çитнĕ пĕр паллă çын çапла каласа панă: Венгрин кăнтăр пайĕнче, икĕ эрне çитет ĕнтĕ, виçĕ полк пăлхав пуçласа янă. Вĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ярасшăн пулнă. Хорти приказĕ тăрăх, çав полксене салатса янă, пăлхава хутшăннисене çар трибуналĕн судне панă. Çак кунсенче трибунал приговорĕ тăрăх айăпланакансен пĕрремĕш ушкăнне, темиçе вунă салтака, персе пăрахнă.

Венгерсен виçĕ полкĕ пăлханни çинчен тĕплĕнрех калакан хыпарсем

ЖЕНЕВА, февралĕн 24-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть кăнтăрти Венгрире тăракан виçĕ полк пăлханни çинчен пĕлтернĕччĕ. Кунти журналистсем çав пăлхав çинчен тĕплĕрех калакан хыпарсем илнĕ.

Будапешта Риббентроппа Кейтель пырса кайсан, вăхăт нумаях та иртмен, çав полксем тăракан Капошвара приказ çитнĕ. Приказра çав полксене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне кайма хатĕрленме хушнă пулнă. Приказ салтаксене кăна мар, офицерсене те питĕ те тарăхтарса янă. Пĕр полкĕнчи салтаксем митинга пухăннă та çапла каланă: эпир Гитлер интересĕсемшĕн хамăрăн юна юхтарма кирлĕ те кайма шутламастпăр, мĕншĕн тесен эпир вырăс халăхне Венгрин тăшманĕсем тесе шутламастпăр. Пирĕн шухăшпа Венгри тăшманĕсем гитлеровецсем пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен, никам та мар, гитлеровецсем Венгрин никама пăхăнманлăхне пĕтерсе лартса, Венгрие вăрçа кĕртсе ячĕç, тенĕ. Вара салтаксем казармăсенче хупăнса ларнă. Офицерсен пĕр пайĕ салтаксемпе пĕр майлă пулса кайнă, ыттисем полк командирĕпе пĕрле тарнă. Хула коменданчĕ ытти икĕ полксен командованине пăлхав пуçласа янă полка хĕçпăшалсăрлатма хушнă. Анчах та çав икĕ полкри салтаксем пурте тата офицерсем те чылайĕшĕсем хăйсем те пăлхав пуçласа янă полкпа пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтернĕ. Çав полксенче пулнă полковой пухусенче çавăн пек каланă резолюцисем йышăннă.

Хула коменданчĕ çак ĕçсем çинчен Хотие телеграфпа пĕлтернĕ. Вара Капошвар хулине Будапештран васкавлă йĕркепе Германин пĕр полкĕпе жандармсен полкне, Кадаркут хулинчи гарнизонăн офицерĕсемпе Магоч хулинчен танковăй полка илсе пынă. Вара çав виçĕ полкăн пĕтĕм составне арестленĕ. Военно-полевой суд кунĕн-çĕрĕн суд тăвать. Темиçе вуншар çынна персе пăрахнă та ĕнтĕ. Пăлхав пуçласа янă полксенчи офицерсене Будапешта илсе кайнă. Вĕсен пурнăçĕ çинчен нимĕн те паллă мар.

Влаçсем хаçатсене çак ĕç çинчен çырма чарса лартнă.

Сауди Аравийĕнчен Итали миссине кăларса яни

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ общинăсен палатинче панă ыйту çине ответлесе çапла каланă: Сауди Аравийĕн правительстви нумаях пулмасть Англи правительстви лартнă ыйтупа килĕшнĕ. Калаçу Сауди Аравийĕнчи Итали миссийĕ çинчен пырать. Англи правительстви Сауди Аравийĕн правительствинчен çав миссие Джеду хулинчен кăларса яма ыйтнă. Сауди правительстви çак ыйтупа килĕшсе, Англипе дипломатиллĕ лайăх çыхăну тытса тăрас тĕллеве асра тытса, Итали миссине Сауди çĕршывĕнчен тухса кайма хушнă. Итали посланникĕпе миссин ытти членĕсем те Италие тухса кайнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 61 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: